Пурнӑҫа, ҫӗршыва юрат, тӑван халӑх мӗнпе чӗрӗ, ҫавна юрат!

# ТУСЛӐХ

НУРЛАТ РАЙОНӖН ОБЩЕСТВӐПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧӖ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ.* 103 N (4672) *1998 ҫулхи сентябрь (авӑн) уйӑхӗн 11-мӗшӗ, эрнекун* *Палӑртнӑ хакпа.*

Хресченсен династийӗ

## “НАДЕЖДӐН” ФРОЛОВСЕМ ПУР

*Хресченсен хуҫалӑхӗсен Мичурин ячӗпе хисепленекен ассоциацийӗнче Фроловсем виççӗн ӗҫлеççӗ: ҫемье пуҫлӑхӗ Владимир Матвеевич, аслӑ ывӑлӗ Николай, иккӗмӗшӗ - Иван. Вӗсем ашшӗн ҫулне суйласа илсе, механизаторсем пулса тӑнӑ. Ивана салтака чыслӑн ӑсатнӑ чухне ҫакӑн пек наказ панӑ: служба хыççӑн тӑван яла таврӑн - ӗҫлекен ҫынсем яланах кирлӗ. Каччӑ хӑй те ҫавӑн пек шухӑшлать, мӗншӗн ялтан тухса каймалла-ха, аслӑ пиччӗшӗ ҫакӑнтах юлнӑ вӗт.*

*Ҫапла, Николай мӗнпур ӗҫре ушӑн тӗслӗх: унӑн килӗнче те йӗркелӗх хуҫаланать, хуҫалӑхра та хисепре. Ҫулла КСК-100 комбайнпа выльӑх апачӗ хатӗрлекен звено шутӗнче вӑй хурать. Ашшӗ Владимир Матвеевич та ҫакӑнтах ӗҫлет, вӑл хӑватлӑ “ДОН-680” техникӑна пилӗк ҫул ҫӳретет ӗнтӗ. Ҫителӗклӗ чухлӗ апат хатӗрлесе хӑварас тесе вӑйне шеллемесӗр тӑрӑшать. Фроловсенчен чи асли - яваплӑха туякан, тӳрӗ кӑмӑллӑ та ӑслӑскер. Ывӑлӗсене те вӑл ӗҫе, ҫӗре юратма вӗрентнӗ. Хуҫалӑх (халь вӑл “Надежда” агрофирма составне кӗрет) ҫакӑн пек шанчӑклӑ ҫынсемпе чӑннипех мӑнкӑмӑлланма пултарать.*


Н.Азизов ӳкерчӗкӗнче: В.Фролов.

## Высокогорск хӑнисем

Сентябрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн района Высокогорск районӗнчен делегаци килчӗ. Ертӳҫи - ҫак район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р.Г. Шаяхметов.

Вӗсен тӗп тӗллевӗ - выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен, тӗпрен илсен, сысна ӗрчетекен отрасльти малта пыракан технологипе паллашасси.

Малтан хресченсен хуҫалӑхӗсен “Алга” ассоциацийӗнчи сысна ферминче пулчӗҫ, унта хӑнасем нумаях пулмасть кӗртнӗ формӑпа - ӗҫшӗн натурӑпа тӳлессипе, ҫаплах витесенче юсав мӗнле пынипе паллашрӗҫ. Ҫакӑн хыççӑн делегаци хресченсен хуҫалӑхӗсен Муса Джалиль ячӗпе хисепленекен ассоциацийӗнче тӑкаксене хирӗҫле механизм мӗнле ӗҫленине курчӗ. Вӑтам Хӑмӑшлӑ ялӗнче, “Надежда”, “Агрокультура” кооперативсенче сысна пӑхас ӗҫ опычӗпе паллашрӗҫ. “Агрокультура” кооперативра, “Киклӗ” хуҫалӑхра хӑнасем сӑвакан залсене пӑхса тухрӗҫ, вӗсене сӗт пастеризаторӗ уйрӑмах кӑсӑклантарчӗ. Делегаци ҫаплах хресченсен хуҫалӑхӗсен Синдряков ячӗпе хисепленекен ассоциацийӗнче те пулчӗ, унта вӑл фермӑсене ҫӗнетес ӗҫ опычӗпе тата сысна ӗрчетекен комплексри ҫӗнӗ ӗҫсемпе паллашрӗ.

Высокогорск хӑнисем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен отрасльте пулса иртнӗ улшӑнусене пысӑк хак пачӗҫ. Вӗсем ҫаплах хулари ҫӗнӗ объектсенче - Ҫамрӑксен ҫуртӗнче, искусствӑсен шкулӗнче, бассейнра, спортзалта, аэропортра пулса курчӗҫ. Хӑнасен сӑмахӗсем тӑрӑх, вӗсем районта курса ҫӳресе хӑйсемшӗн интереслине тата усӑллине чылай палӑртнӑ.

## Ӑшшӑн саламлатпӑр

Тутарстан Республикин Президенчӗн Указӗпе “Рабочисене тивӗҫтерекен управлени” ООО Нурлатри пайӗн начальникне Василя Нурлыгаяновна Хузинана “Тутарстан Республикин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ” хисеплӗ ят панӑ.

## Пурнӑҫ тӑршшӗпех ӗҫре

Асия Хафизуллина чылай ҫул хушши ӗнтӗ уйрӑм ҫынсенчен сӗт пухать. Канӑҫсӑрскер, вӑл хӑйӗн ӗҫне кӑмӑлпах пурнӑҫлать, ҫынсемпе пӗр чӗлхе тупма пӗлет. Ҫав вӑхӑтрах Асия чӗкӗнтӗр участокне те ӗҫлесе хатӗрлет. Кирлӗ пулсан йӗтем ҫинче те ӗҫлет, хӗлле вара дояркӑсене улӑштарать. Ӑҫта кӑна ӗҫлесен те, хушнӑ ӗҫе яваплӑх туйса пурнӑҫлать.

Вӑл питӗ лайӑх кил хуҫи хӗрарӑмӗ, анне тата мӑшӑр. Мӑшӑрӗпе Ильхампа пӗрле вӗсем пилӗк ача пӑхса ӳстереççӗ. Аслӑ хӗрӗ Энже Хусанти педагогика институтӗнче 4-мӗш курсра вӗренет. Ывӑлӗсем Ильнурпа Ильсур пӗчӗкренех лашасене юратаканскерсем, кӑҫалхи Акатуйри ӑмӑртусене хутшӑнса 1 тата 3-мӗш вырӑнсене йышӑннӑ. Алсу кӑҫал 4-мӗш класа каять, кӗҫӗн ывӑлӗ Алмаз ача-пӑча садне ҫӳрет. Ҫемье пуҫлӑхӗ - Ильхам - питӗ лайӑх атте. Кӑҫал вӗсем ҫӗнӗ ҫурта пурӑнма куҫнӑ. Ан тив, ҫӗнӗ вырӑнта та вӗсен ӑнаҫлӑх кӑна пултӑр, ҫемьере малтанхи пекех килӗшӳ тата лӑпкӑлӑх хуҫалантӑр.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кӑчӑканлӑ ялӗ.**

## Пӑхса тух. Танлаштар. Пӗтӗмлет

**Цифрӑсен пӗрремӗш графи - кӑҫалхи сакӑр уйӑх хушшинче сысна ҫури пурӗ илнӗ, иккӗмӗшӗ - 100 сысна ами пуҫне.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| “Родина” | 2365 | 1065 | Синдряков яч.хис. | 3405 | 347 |
| М.Джалиль яч.хис. | 1200 | 845 | “Сӗнче” | 470 | 338 |
| Кузнецов яч.хис. | 3070 | 637 | “Татарстан” | 1300 | 332 |
| “Руслан” кооп. | 451 | 543 | Нефтебазӑн х/х | 700 | 330 |
| “Нива” кооп. | 400 | 482 | “Комбайн” | 402 | 330 |
| “Нур” кооп. | 370 | 446 | Мичурин яч.хис. | 1000 | 315 |
| “Чулпан” | 979 | 431 | Сахӑр завочӗн х/х | 740 | 308 |
| “Урняк” | 260 | 413 | РСУн х/х | 900 | 302 |
| “Рассвет” | 2780 | 402 | “Киклӗ” | 660 | 222 |
| “Тӗрнеҫ” | 1535 | 392 | Хуҫалӑхсем хушшинчи сысна ӗрчетекен пӗрлешӳ | 800 | 205 |
| “Заветы Ильича” | 921 | 384 | “Алга” | 400 | 172 |
| “Заря” | 206 | 375 | | | |
| “Илюткино” - 1 | 591 | 367 | | | |
| Хафизов яч.хис. | 2414 | 365 | | | |
| “Тан” | 219 | 359 | **Район тӑрӑх** | **28538** | **393** |

Эпир сакӑр уйӑх хушшинче мӗн чухлӗ сысна ҫури илнине абсолютлӑ цифрӑсемпе тата 100 пуҫ сысна ами пуҫне ахальтен мар ҫыратпӑр. Хуҫалӑхсен ертӳҫисен, специалистсен тата выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансен танлаштарса пӑхса шухӑшламалӑх пур. Куратпӑр ӗнтӗ, кӑҫал Синдряков ячӗпе хисепленекен тата Кузнецов ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхсенче сысна ҫури чи нумай илнӗ, пӗрремӗшӗнче сысна йышӗ пысӑк пулнипе ҫакӑн пек кӑтарту тунӑ. Тӗрӗс ӗнтӗ, витесем мӗн чухлӗ пысӑкрах, сысна йышӗ мӗн чухлӗ нумайрах, ҫавӑн чухлӗ усӑллӑрах. Пӗр сысна аминчен ҫулталӑк хушшинче темиҫе ҫӑвӑрӑмра нумайрах сысна ҫури илни пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине ӑнлантармалла та мар пулӗ. Ҫапла майпа, кӑҫал “Родина” хуҫалӑхра сысна ҫурисем 765 пуҫ ӳснӗ, кашни 100 пуҫ сысна ами пуҫне, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, ку кӑтарту 400 пуҫа яхӑн ытларах. Муса Джалиль ячӗпе хисепленекен хуҫалӑхра та ӗҫсем ҫавӑн пек. “Сӗнче” ассоциаци кӑҫал ҫак икӗ кӑтартупа кая юлса пырать, “Заря”, “Тан”, “Урняк” хуҫалӑхсенче те сыснасене отчет валли ҫеҫ усраççӗ. “Заветы Ильича”, “Рассвет”, “Тӗрнеҫ” ассоциацисенче тата РСУ хушма хуҫалӑхӗнче те кӑтартусем пачах та лайӑхланман тесен те юрать. Ҫапла майпа районта сакӑр уйӑх хушшинче, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, виҫӗ пин ҫура ҫеҫ ытларах илнӗ. Кӑҫал сысна ӗрчетес ӗҫ умне пысӑкрах тӗллевсем лартнӑччӗ вӗт-ха.

## Творчество каҫӗ пулать

Ҫак эрнере пирӗн ентешӗн - ҫыравҫӑн, ӑсчахӑн Талгат Галиуллинӑн творчество каҫӗсем иртесси ҫинчен пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ. Эрнекун - Кӑчӑканлӑ ялӗн культура ҫуртӗнче, шӑматкун вара районти культура ҫуртӗнче пысӑк творчество каҫӗсем иртӗҫ. 18 сехетре пуҫланать. Мероприятире ҫаплах паллӑ ҫыравҫӑсем, сӑвӑҫӑсем, литература специалисчӗсем хутшӑнӗҫ. Сӑмахлӑх ӑстаҫисене пурне те творчество каҫне чӗнетпӗр.

**ЙӖРКЕЛӲ КОМИТЕЧӖ.**

## Тутарстан чӑвашӗсем те пӗрлешесшӗн

Шупашкарта халь районсен кашнийӗн тенӗ пекех ентешлӗх пур. Хӗлле вара Пушкӑртстанра ҫуралса ӳснӗ чӑвашсем Чӑваш ен тӗп хулинче хӑйсен пӗрлӗхне туса хучӗҫ. “Тутар чӑвашӗсем пиртен кая юлчӗҫ”, - ҫапла шӳтлеме те пӑхрӗҫ ун чух. Анчах вӗсен те вӑхӑчӗ ҫитрӗ иккен.

Тутарстан территорине кӗрекен чӑваш ялӗсенчен паллӑ ҫынсем йышлӑ тухнине пӗлетпӗр: Яковлев, Максимов-Кошкинский, Хусанкай. Паллисем-сумлисем, Шупашкарта пурӑнаканскерсем, халӗ те нумай. Пурне те асӑнас-тӑк, самай вӑрӑм список пулмалла. Ҫапах юнашар пурӑнаççӗ пулин те, пурте пӗр-пӗрне лайӑх пӗлеççӗ теейӗмӗн. Паллашас, савӑнаҫпа хуйха пӗрле пайлас, пӗр-пӗрне пулӑшас - ҫак тӗллеве тӗпе хурса ӗнтӗ Тутарстан чӑвашӗсем те Шупашкарта хӑйсен ентешлӗхне туса хума палӑртнӑ. Йӗркелӳ комитечӗ пур, пуху вара Чӑваш гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институтӗнче авӑнӑн 7-мӗшӗнче 14 сехетре уҫӑлнӑ.

("Хыпар" хаҫатран).

# Элеваторăн хăйĕн арман

**Нурлат элеваторĕнче хăйсен арманне тăвасси ҫинчен тахҫанах ĕмĕтленнĕ. Тырă йышăнасси, ăна ĕҫлесе хатĕрлеме Хусан, Пĕкĕлме, Ҫыранҫи Чаллă хулисене ăсатасси, кайран вара каялла хатĕр продукци - ҫăнăх илсе килесси предприятишĕн йӳнех пулман. Ҫапла, Пĕкĕлмене пĕр тонна тулă ăсатасси кăна 26 тенкĕ те 80 пуса ӳкет. Пĕкĕлмерен пĕр тонна ҫăнăха 1957 тенкĕпе ăсатнă пулсан, кун ҫумне тата илсе килнĕшĕн 6 процент, чугун ҫул ҫинче тиесе пушатмалли ĕҫсемшĕн тӳлессине хушсан сутмалли хак пурĕ 2500 тенке ларнă. Ҫак хакпа кам кăмăллă пулĕ-ха? Ҫавăнпа та юлашки икĕ ҫул элеваторта район администрацийĕ пулăшнипе ҫăнăх туса кăларас ĕҫе ҫине тăрса тытăннă. Чи малтан армана вырнаҫтармалли хушма ҫурт тунă. Чулхулара пĕр сехетре 1 тонна тырă ĕҫлесе хатĕрлеме пултаракан арман туяннă, унти ăстаҫăсем ăна хăйсемех монтажланă. Августăн 28-мĕшĕнче вара, ТР Премьер-министрĕ Р.Н.Минниханов килнĕ кун, пысăк хăнана ҫĕнĕ тухăҫ тырринчен авăртнă ҫăнăхран пĕҫернĕ ҫăкăрпа сăйланă.**





Паллах ĕнтĕ, хăть мĕнле ĕҫре те малтанхи тапхăр вăл тĕрекленнĕ вăхăт. Хальхи вăхăтра коллектив проектпа палăртнă хăват ҫине куҫать. Вăл виҫĕ ҫынран тăрать, аслă мастер Ильгизар Миншакирович Тухватуллин малтан комбикорм завочĕн директорĕ пулса вăй хунă. Вăл питĕ лайăх оганизатор тата хăйĕн ĕҫне лайăх пĕлекен специалист. Паян-ыран ĕҫе виҫĕ сменăпа йĕркелеме шутлаççĕ. Ҫапла майпа элеватор коллективĕ хăйĕн тахҫанхи ĕмĕтне пурнăҫланă. Анчах арман тата мĕн парать-ха?

- Тупăш пысăк пуласса шанатпăр. Пĕрремĕшĕнчен, пĕр тонна ҫăнăхăн хăйхаклăхĕ 1892 тенкĕ шутланать, ку вăл илсе килекеннинчен 30 процент йӳнерех, - тет элеватор директорĕ А.Н.Миназов. - Ҫакă малашне ĕҫе анлăлатма май парать. Уйăрса панă фондпа килĕшӳллĕн продукцие суту-илӳ организацийĕсене, апат-ҫимĕҫ комбинатне тата ҫăкăр заводне ăсатăпăр. Йӳнĕ продукци вĕсене килĕшмелле. Унччен элеватор хăйсем валли кăна ҫăкăр пĕҫернĕ пулсан, малашне коллектив ҫак ĕҫе анлăлатĕ, хăйĕн ҫăкăрне хăех сутĕ. Ҫаплах лапша, макарон изделийĕсем туса кăлярма тытăнасшăн. Хальхи вăхăтра арманта пысăк пахалăхлă тата пĕрремĕш сортлă ҫăнăх, манна кĕрпи туса кăлараççĕ. Унсăр пуҫне халăха услугăсем пама планлаççĕ. Кĕскен каласан, арманта ĕç ҫителĕклĕ.

- Пĕр талăкра 5-6 тонна ҫăнăх туса кăларсан арман хăйне хăвăрт тӳрре кăларĕ, - тет Ахметнакип Нурмеевич, унтан цифрăсем илсе кăтартать. Чăн-чăн хуҫа шута пĕлмелле ҫав. Кăҫал элеваторти ĕҫе анлăлатма, ҫĕнетме чылай укҫа-тенкĕ тăкакланă. Армана хута яма кăна 1 миллион та 283 пин тенкĕ тăкакланă, унсăр пуҫне тырра типĕтессине газ ҫине куҫарни 650 пин тенке ӳкнĕ. Анчах та малашне ку тăкаксем икĕ-виҫĕ хут перекетленессе хуҫасем шанаççĕ. Хальхи вăхăтра котельнăйсене пурне те газ ҫине куҫарас тесе тăрăшаççĕ, проект ĕҫлесе хатĕрлеççĕ, шалти ĕҫсене пурнăҫлаççĕ. Хальхи финанс енчен йывăр тапхăрта ҫакăн пек кăткăс задачăсене пурнăҫлакан коллектив малашнехине шанса ĕҫлет. Унăн ĕҫченĕсем ĕç укҫи вăхăтлă парайманнине ăнланаççĕ, хальхи тăкаксем малашне хăйсене тӳрре кăларĕç. Акă ҫапла, хальхи улшăнусем элеватор умне лайăх малашлăх уҫаççĕ, рынок условийĕсенче экономика ҫирĕплетме май параççĕ.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Ӳкерчĕксенче: Нурлатри элеватор арманĕнче.**

*** Санăн ҫыннусем, ял**

*Тула хулинчи ăстаҫă, пăрҫана (чĕрчун) таканлани ҫинчен тухнă сăмах-юмаха астăватăр-и? Шăп кăна ҫавăнтанпа ĕнтĕ сулахай алăпа ĕҫлекенсем пултарулла шутланаççĕ те.*

# Сулахай алăпа ĕҫлекен ҫын

Ялавăр ялĕнче тĕл пулнă Клементий Николаевич Охотников та пире Тулăри паллă ăстаҫă сăнарне аса илтерчĕ. Ҫавăн пекех каласма, култарма юратаканскер, пурте ун пек пулаймаççĕ ҫав. Ăна халь те пăрҫана таканлама хушсан, вăл ҫухалса каймасть пулĕ. Вăл та сулахай, ĕҫлемелли мĕнпур хатĕре ҫав алă майлă тунă. Вăл вĕсемпе темĕн те тăвать: алăксем, чӳрече рамисем, кĕреҫесем, пусă валли кăшăлсем, витресем. Витрисем вара унăн заводри пекех, тен, лайăхрах та пулаççĕ пулĕ, кунта та хăйне евĕрлĕ тăвать: витрен хĕррисене хутлатнă чухне, ҫирĕпрех пултăр тесе, аяла пăралук хурса хăварать. Ҫавăнпа та вĕсене пурте кăмăллаççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, "Знамя Октября" хуҫалăха валли кăна ҫавăн пек 75 витре хатĕрленĕ, ҫаплах куракъелсем те заказ панă. Дояркăсем вара ҫакăн пек меллĕ те ҫăмăл витресемшĕн питĕ савăннă. Клементий Николаевичăн мăшăрĕ Дарья Михайловна та ăна мухтаса пĕтерейместь.

Ҫаплах кĕреҫесем, чӳрече рамисем, алăк блокĕсем те заказпа чылай тăвать. Ăстаҫă килĕнче те пурне те хăй тунă. Аслашшĕ столяр ĕҫне юратнипе, кăҫал ăна ывăлĕн хĕрĕ Кемерово хулине чĕннĕ, унта ывăлĕ ҫурт тума шутланă иккен. Клементий Николаевич ывăлĕ патне кайма кăмăлпах килĕшĕччĕ, анчах халь вăхăчĕ те, сывлăхĕ те ĕлĕкхи пек мар ҫав...

Унăн ялти ҫурчĕ пысăках мар, анчах та кунта ҫирĕп хуҫа алли пурри сисĕнет.. Малти пӳлĕме кĕмелли алăка хитрелетсе касса тунă. Ăстаҫăн чӳречисем те ыттисенни пек мар, вĕсене икĕ хут кĕленчеленĕ лартнă, ҫил мар, тусан та кĕмест, хĕл те хăрушă мар.

Вĕсен картишĕнче те тирпейлĕх хуҫаланать: каснă вутта тирпейлĕ, тикĕс купаласа хунă, витисенче те таса. Мĕнле ĕлкĕреççĕ-ши, мĕн тесен те 64 ҫулта вĕт?

- Эпĕ ĕҫсĕр ларăймастăп, ĕҫлемесен чирлеме тытăнатăп, - тет Клементий Николаевич.

Клементий Охотников малтан районти ҫыхăну узелĕнче монтер пулса вăй хунă, кайран шкулта инструктор, завхоз, кочегар пулнă, пенсие тухсан вара ҫамрăк чухне училищăра вĕреннĕ ĕҫе пурнăҫлама тытăннă. Ҫав сулахай аллипех Клементий Николаевич кран-балка юсама, трактор, машина ҫӳретме пултарать. Анчах та хăйĕн хуҫалăхне, ыттисем пурте пурнăҫлама пултарайман ĕҫе никама вĕрентсе хăварма ҫуккишĕн вăл пăшăрханать.

... Халь мĕнле ĕҫе те хăрамасăр тума май пурришĕн те ватăсем савăнаççĕ, маларах ирĕк паман вĕт. Клементий Николаевич вăл вăхăта астăвать-ха. Ку 1975 ҫулта пулнă, вăл кăшт укҫа тăвас тесе, пусă кăшăлĕсем хатĕрлеме тытăннă, пусă чавма та пулăшнă. Анчах та, комисси килнĕ те штраф тӳлеттернĕ. Ҫавăнтанпа вăл вара урăх ун пек пулмасть тесе хăйне сăмах панă.

Халь вăл хăйĕн сăмахне тытайманшăн ҫылăх тесе шутламасть. Этем хăйĕн аллипе мĕн те пулин ăсталама пултарать пулсан, мĕншĕн-ха ăна пытармалла? Клементий Николаевич кашни кун мĕн-тĕр ăсталать, мăлатукпа шаккать, савалать, касать, ялан ĕҫлет. Ҫак ялта пурăнакансем ăстаҫă пулăшасса, вĕсене тата мĕнле те пулин ҫĕнĕлĕхпе тĕлĕнтерессе шанаççĕ.

**С.НУРУЛЛИНА.**

**Ялавăр ялĕ.**

# Пирĕн пачăшкă ҫинчен

Нумаях пулмасть "Туслăх" хаҫатра Линейная урамĕнче вырнаҫнă Серафим Саровски чиркĕвĕ хупăнать тесе ҫырнăччĕ. Ҫакă пирĕн чиркĕве ҫӳрекенсене питĕ пăшăрхантарчĕ, мĕншĕн тесен чугун ҫул тата сахăр вĕретекенсен поселокĕсенче пурăнакан ватă ҫынсене Илле чиркĕвне ҫӳреме питĕ йывăр, унта ҫитейменнисем те пур вĕт.

Серафим Саровски чиркĕвĕ малалла ĕҫлени ҫинчен савăнсах пĕлтеретпĕр, пирĕн чиркĕве ҫӳрекенсем эрнекунсенче, шăматкунсенче тата вырсарникунсенче, ҫаплах тĕн уявĕсенче пыма пултараççĕ.

Николай аттене (Николай Иванович Сиплатова) пирĕн пата Хусанти епархи Илле Пророк чиркĕвне тума тытăнсанах янă. Николай атте пирĕн пата киличчен те икĕ чиркӳ тунă - Ҫыранҫи Чаллăра тата Аксура.

Чиркӳ настоятелĕ протоиерей Николай Сиплатовăн ĕҫĕсене наградăсем парса палăртнă: 1988 ҫулта Мускаври тата пĕтĕм Руҫри Пимен Патриарх алă пуснă Патриарх грамотине панă, каярах Анастасий архиепископ алă пуснă Хусанти епархи грамотине илме те тивĕç пулнă.

Нумаях пулмасть Николай атте хăй 60 ҫул тултарнине паллă турĕ. Вăл халĕ те хăйĕн ĕҫне тулли хăватпа пурнăҫлать-ха. Йывăр пурнăç тата ытти те унăн характерне, кăмăлне хытарман, пăсман. Вăл ҫынсемпе яланах таравватлă калаҫать, хăйĕн пулăшăвĕ кирлĕ пулсан вара, хăть кама та пулăшма хатĕр.

Эпир ăна малашне те ҫирĕп сывлăх сунатпăр, ан тив, пирĕн чиркĕве ҫӳрекенсем, хальхи йывăр пурнăҫпа тарăхнăскерсем, малашне те унăн кĕллисене итлесе чун-чĕрисене ҫемҫетчĕр.

**Н.РУМЯНЦЕВ.**

**Серафим Саровски храмĕн чиркӳ Совечĕн председателĕ,**

**А.СПИРЧАГОВА,**

**Совет членĕ.**

# Сывлăх страници

## Лептоспироз тата ăна сирсе ярасси

Хальхи вăхăтра чылайăшĕ çутçанталăкра канма тăрăшать. Турпоходсене çӳрекенсен шучĕ кунсерен ӳсет. Анчах час-часах этем çутçанталăкпа тĕл пулма хатĕрленменни пулкалать. Эсир уйрăм гигиенăн чи ансат правилисене пăхăнсан, варвитти, вар тифĕ, лептоспироз тата ытти чирсем ермĕç.

Лептоспироз - ерекен чир, унпа çынсем те, выльăхсем те чирлеççĕ. Çирĕн палăрман тапхăрĕ - 5-12 талăк. Чир пуçламăшĕ сасартăк температура ӳснипе, пуç, çаплах шăм-шак, хырăм, мăй вăйлă ыратнипе, шăнтнипе, куçсем шыçнипе, пĕвер ӳснипе палăрать - çаксем пурте çийĕнчех врач патне каймаллине систереççĕ. Лептоспироз ытларах çуллахи тапхăрта шывпа сарăлать. Чирленин сăлтавĕ усă çăлкуçсенчи шывпа усă курни - вĕсен çыранĕсенче кăшлакан чĕрчунсем пурăнаççĕ. Шыв сахал юхакан кӳлĕсенче (пĕвесенче, вăрмансенчи пысăк мар кӳлĕсенче) шыва кĕрсен уйрăмах лептоспирозпа чирлеççĕ.

Туристла походсене, сунара, пулă тытма, дачăна кайнă чухне çак сĕнӳсене асра тытăр.

Шыв витмен ată-пушмак тăхăнăр.

Юханшывсенчи, кӳлĕсенчи е пусăри шывпа ĕçме е пахчаçимĕçе, улма-çырлана çума вĕретнĕ хыççăн кăна усă курăр.

Шыва кĕме мĕнле вырăн суйласа илмелле? Юханшывпа юнашар вырнаçрăр пулсан, шыв çӳлелле юхнă çĕрте выльăх-чĕрлĕх ферми, кĕтӳ çӳрекен çарансем пуррипе çуккине асăрхăр. Выльăхсем - лептоспироз саракансем - шывра сурчăкпа, шăкпа лептоспирăна хăварма пултараççĕ. Вăрмансенчи пĕчĕк кӳлĕсенче, пĕвесенче тăракан шыв çăвăнма тата шыва кĕме юрăхлă мар - вĕсем лептоспироза сараççĕ.

Çĕр каçмалли вырăн мĕнле суйласа илмелле? Паллах, типĕрех вырăн суйламалла, çывăхра утă, çапă купи ан пултăр, мĕншĕн тесен вĕсене кăшлакан чĕрчунсем илешеççĕ. Апат-çимĕçе çинĕ хыççăн тĕплĕ чĕркемелле, шыва вара хупă савăтра упрамалла.

Куратăр ĕнтĕ, канашсем питĕ ансат, йăлана кĕнĕ гигиена правилисене пăхăнмалла тата çутçанталăк илемĕпе киленнĕ май асăрханулăх мерисемпе нормисене пурнăçламалла çеç.

**Т.СОРЕНКОВА,**
**ЦГСЭН эпидемиологи пайĕн заведующийĕ.**

## Асăрханулла пулăр: кăмпасем





Юлашки вăхăтра республикăра кăмпа çисе ушкăнпа наркăмăшланнă тĕслĕхсем чылайланнă. Июнь уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа август уйăхĕ пуçламăшĕччен кăмпапа наркăмăшланнă 20 тĕслĕх регистрациленĕ. 37 çын инкек тӳснĕ, вĕсенчен пиллĕкĕшĕ вилнĕ.

Тĕрĕсленĕ хыççăн çакă палăрнă: кăмпасене лайăх пĕлмен çынсем пуçтарнă - карçинккана яка кăмпа вырăнне тĕссĕр тислĕк кăмпи те лекнĕ; кăмпасене сортламаççĕ, вĕсене хатĕрлемелли правилăсене пăсаççĕ. Час-часах кăмпасене çумаççĕ, йĕпетмеççĕ тата пĕçермеççĕ.

Çакăн пек инкек ан пултăр тесен мĕн тумалла-ха? Чи малтан çиме юрăхлă, наркăмăшлă кăмпасене уйăрма пĕлмелле. Çиме юрăхлă кăмпасенче - вĕсем пирĕн патра 100-е яхăн тĕрлĕ - наркăмăшлă веществосем çук, лайăх ĕçлесе хатĕрленĕ хыççăн вĕсене пĕр хăрамасăр çиме юрать. Кăтра кăмпара, ут тутинче тата ытти хăш-пĕр кăмпасенче наркăмăшлă веществосем пур, анчах та продукта хатĕрлемелли условисене çирĕп пăхăнсан наркăмăшлă веществосене пĕтĕмпех пĕтерме пулать. Асра тытăр! Наркăмăшлă кăмпасем пластинкăллă, шлепкин аял енче тымартан саланса каякан пластинкăсем пур. Апла пулсан, пластинкăллă кăмпасене пуçтармалла мар!

Кĕпçеллисене: шурă кăмпа, ăвăс кăмпи, хурăн кăмпи, масла кăмпи тата ыттисене çеç пуçтармалла. Вĕсене уйăрса илме питĕ ансат, шлепкисен аял енĕ вĕсен тикĕс е шăтăклă-шăтăклă пулать.

Наркăмăшлă кăмпасем хăть мĕнле хатĕрлесен те сывлăхшăн сиенлĕ. Чи малтан ку тĕссĕр тислĕк кăмпине, шăна кăмпине тивет. Тĕссĕр тислĕк кăмпипе наркăмăшланни питĕ йывăр иртет. Унри вăйлă наркăмăшсем - алкалоидсем ăшăпа ĕçлесе хатĕрленипе пĕтмеççĕ, организмра хăвăрт сарăлаççĕ. Уйрăмах вăл пĕвере, пӳрене тата тĕп нерв системине вăйлă сиенлетет.

Кăмпана çинĕ хыççăн 8 сехетрен пуçласа пĕр талăкчен нимĕн те палăрмасса та пултарать. Наркăмăшланнин пĕрремĕш паллисем - кăмăл пăтранни, час-часах хăсни, ăш ыратни, варвитти, вăй çукки. Ун пек чух тӳрех врач чĕнмелле е чирлĕ çынна больницăна илсе каймалла.

Шăна кăмпипе наркăмăшланни 5-6 сехет хыççăн палăрать: çӳлте асăннă палăрăмсемсĕр пуçне вăйлă тарлатать, сĕлеке юхать, сывламалли çӳлти çулсем йĕпенсе кăпăкланаççĕ, сывлăш пӳлĕнет, çын кăвакарса каять, куç шăрçисем пĕчĕкленеççĕ.

Тĕрĕс мар ĕçлесе хатĕрленĕ кăмпасене çисен хăрушă чирпе - ботулизмпа чирлеме пулать. Кăмпасене консервланă чухне вĕсене лайăх çумалла, тасатмалла, консервсене тăпра, унпа пĕрле вара ботулинус спорисем ан лекчĕр тесе тата темиçе хут çумалла. Лайăх хупнă банкăсенче вĕсем аталанаççĕ, çавна май пулакан микробсем питĕ хăрушă наркăмăш кăлараççĕ.

Пĕчĕк ачасен, ватă, чирлĕ, пӳре, пĕвер чирĕсемпе аптракан çынсен кăмпа çимелле маррине пĕлмелле.

Врач килсе çитиччен чирлĕ çынна пулăшу памалли темиçе канаш. Чи малтан унăн варне, пыршăлăхне тасатмалла, унтан вырăн çине выртармалла. Вара ăшă шыв, сода шĕвекĕ е марганец калийĕн вăйсăр шĕвекĕ ĕçтерсе, çавна май хăстарса тасатмалла.

Пыршăлăха тасатмалли хатĕрсем - касторка çăвĕ, йӳçĕ тăвар, клизма. Организм шĕвек тата тăвар нумай çухатнипе чирлĕ çыннăн тăварлă шыв е çăра чей пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн сыпмалла. Алкоголь шĕвекĕсене ĕçме юрамасть - вĕсем сиенлĕ веществосем сарăлассине хăвăртлатаççĕ.

Сиплев учрежденийĕсенче кăмпа çисе наркăмăшланнă çынсене сиплемелли пĕтĕм кирлĕ эмелсем, хатĕрсем пур. Анчах та чирлĕ çынна вăхăтлă илсе пырсан çеç сиплев усăллă. Кун çинчен кашнин асра тытмалла.

**Л.НАБИУЛЛИНА,**
**ЦГСЭН санитари вĕрентĕвĕн инструкторĕ.**

***Кăмпа пухмалли, ĕçлесе хатĕрлемелли тата сутмалли санитари правилисенчен:***

***7.10. Пасарта сутма юрамасть:***

***- пĕçернĕ, тăварланă, маринадланă кăмпасем;***

***- кăмпаран пĕçернĕ икра, солянка, салат тата ыттисем;***

***- килти условисенче хатĕрленĕ кăмпа "консервсем".***

## Чӳрече анинчи сиплевçĕ

**Пирĕн чӳрече анинчи алоэ курăкĕ çав тери ӳссе, сарăлса кайрĕ. Питĕ усăллă теççĕ ăна, анчах мĕнле чиртен сиплет тата эмелне мĕнле хатĕрлемелле - пĕлместпĕр.**

**С.СКВОРЦОВА.**

Килте тачка çулçăллă алоэ ӳсни чăн-чăн пуянлăх темелле. Вăл питĕ нумай чиртен хăтăлма пулăшать. Алоэ сĕткенĕ юна тасатать, сиенлĕ веществосене вăйсăрлатать, шăнса пăсăласран хӳтĕлет, вар хытсан пулăшать, апат ирĕлессине лайăхлатать. Çак ӳсен-тăрантан хатĕрленĕ фармацевтика препарачĕсемпе пыршăлăх шыçассинчен хӳтĕленеççĕ, пӳресен инфекциллĕ чирĕсенчен тата куçăн лăймака сийĕн шыççинчен сипленеççĕ. Алоэ çулçисем витаминсемпе, минераллă веществосемпе, ферментсемпе, активлă белоксемпе пуян пулнă май халăх медицининче вĕсемпе бактерисене пĕтерекен, тасатакан эмел вырăнне усă кураççĕ. Алоэ тĕрлĕ шатрасене, çамрăклăхри угорьсене, кăмăска чирĕсене, хупăллă кукшана пĕтерме пулăшать, сурансене, çавăн пекех урари юн тымарĕсем сарăлнипе пулаканнисене те хăвăрт ӳт илтерет.

Килте эмел хатĕрлеме пилĕк çултан кая мар ӳсекен алоэ кирлĕ. Ăна виçĕ кун шăвармалла мар тата тĕттĕм вырăнта тытмалла. Организма çирĕплетекен шĕвеке çакăн пек хатĕрлеççĕ. Алоэ çулçисене касса илсе ваклаççĕ, миксера ярса е аш арманĕпе авăртса вĕтетеççĕ, 250 грамм алоэ çине 1 стакан шĕвĕ пылпа пĕр стакан хĕрлĕ эрех яраççĕ. Çак хутăша марля витнĕ банкăра пĕр эрне тытмалла, унтан сĕрсе тасатмалла, тăрă шĕвекне çеç ярса илмелле, лайăх пăкăланă кĕленчере упрамалла. Кунне виçĕ хут пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле.

Тĕрлĕ кĕсенсем аптратаççĕ пулсан, çакăн пек эмел пулăшать: алоэ çулçисене вĕтетмелле, виçепе çавăн чухлех эмел шур курăкĕн (шалфей) тата шăнăр курăкĕн (подорожник) типĕ çулçисене хушмалла, тин вĕренĕ шыв ямалла. Пĕр сехетрен çак шĕвекпе йĕпетнĕ бинт татăкĕсене кĕсенсем çине хумалла.

Тухтăрсем асăрхаттарнă тăрăх, алоэрен килте хатĕрленĕ эмелсемпе çире пур хĕрарăмсен усă курма юрамасть.

## Хĕç курăкĕ

**"Туслăх" хаçата эпĕ пĕр сиктермесĕр вуласа пыратăп. Хаçат килессе чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Вăл пур енĕпе те интереслĕ. Çулталăк ĕнтĕ эпĕ вырăнпах выртатăп, çӳрейместĕп. Çак чиртен сывалма легендарный диконт е, урăхла, сабельник ятлă курăк кирлĕ теççĕ. Анчах курăк ятне чăвашла пĕлместĕп. Ăçта ӳснине те. Çак курăк çинчен тĕплĕнрех çырса пĕлтерейменĕр-ши?**

**Г.ИЛЬИН.**

Диконт, сабельник болотный вăл - хĕç курăкĕ. Нумай çул ӳсекенскерĕн тымарĕсем таçта çитиех тăсăлса сарăлаççĕ. Туни çӳлелле çĕкленет. Çулçисем тăслака, çӳл енчен симĕс, аял енĕ шурăрах çăмлă, пĕр çулçи 3-7 пăчкă пек картлашка хĕрриллĕ çулçăсенчен тăрать. Чечекĕсем тĕксĕм хĕрлĕ.



Хĕç курăкĕ пирĕн тăрăхра чылай вырăнта ӳсет, уйрăмах нӳрĕ çарансене, курăклă шурлăхсене, çырмаллă вырăнсене, юхан шывсемпе кӳлĕсен çыранĕсене кăмăллать.

Курăкра хытаракан веществосем, фалавонидсем, эфир çăвĕ, сапонинсем, С витамин, каротин пур. Халăх медицининче вархырăм, хĕрарăмсен ар органĕсен, çăвар чирĕсенчен сипленме, тар кăларма, юн кайнине чарма хĕç курăкне вĕретсе ĕçеççĕ.

## Лĕкĕ пĕтерет



* Лимон шывĕпе эрнере пĕрре чӳхесен усси пулатех. Ăна çапла хатĕрлемелле: тăватă лимон хуппине пĕр литр шывра 15 минут вĕретмелле.

* Кăшман шывĕ те пулăшать. Виçĕ литрлă савăта 1,5 л сивĕ шыв ямалла. Кăшмана çуса тасатмалла, турамалла та шыв савăт пырĕ таран хăпариччен тултармалла. Савăта кантăк янаххи çине лартса ун пирки вăхăтлăх манмалла. 5-6 кунран вăл симĕс кăмăсăкпа витĕнет. Хăрама кирлĕ мар. Кăшман шывне марльăпа сарăхтармалла. Пуç çунă хыççăн унпа усă курмалла. Паллах, малтан вĕри шывпа хутăштармалла. Кăшман шывĕпе чӳхенĕ чух пуçа ыраш çăкăрĕпе "çумалла": типсе хытнă 100-150 г. çăкăра вĕри шывра çемçетмелле. Ун нимĕрĕпе çӳçе сĕрмелле те таса шывпа чӳхемелле.

Супăнь е шампунь вырăнне çăмарта е турăх илмелле.

* Пĕр кашăк пилеш курăкне икĕ стакан вĕри шывра 2 сехет лартмалла. Сăрăхтарнă шывпа пуçа супăньсĕр пĕр уйăх çумалла.

## Кулăш

### Эпĕ пĕверпе-ха

*Тухтăр патĕнче:*

*- Салам, тухтăр, эпĕ сирĕн пата пĕверпе килтĕм-ха...*

*- Тавтапуçах, часрах пар пĕверне, холодильнике хурам.*

### Шуйттансене курмасть

*- Алло, "Васкавлă пулăшу"-и?*

*- Çапла.*

*- Часрах килĕр-ха. Манăн арăм ăсран тайăлнă!*

*- Вăл ăсран тайăлни мĕнрен паллă?*

*- Ара, пӳлĕм тулли шуйттансем хĕвĕшеççĕ. Арăм вĕсене курмасть.*

### Çыртма ĕлкĕресчĕ

*Пĕр арçынна йытă çыртнă.*

*- Сире урнă йытă çыртнă, - тĕрĕсленĕ хыççăн пĕлтерет тухтăр.*

*Арçын хут листи илсе хăвăрт-хăвăрт çырма пуçлать.*

*- Эткер хучĕ çырма кирлĕ мар - эпĕ сире сиплесе сыватăтăп, - тет тухтăр.*

*- Эткер çырас шухăш мар-ха. Хам виличчен темиçе тăшмана çыртса уртарма ĕлкĕресчĕ. Çавсен списокне çыратăп.*

## “Сказка”: Çĕнĕлĕхсемпе çивĕч ыйтусем



7-мĕш номерлĕ “Сказка” пуçламăш шкул-ача сачĕ кăçал иккĕмĕш вĕренӳ çулне кĕтсе илчĕ. Пĕлӳ кунĕнче кунта 16 класри 250 вĕренекен линейкăна тăчĕç. Пĕрремĕш çул вĕренекенсем икĕ класс. Пĕлӳ тĕнчине пĕрремĕш утăмсем тăваççĕ. Линейкăра шкул-ача сачĕн директорĕ Р.Г.Карымова ачасене ăнăçлă вĕренӳ сунчĕ, вĕсене кĕтсе илме шкул тĕплĕ хатĕрленнине палăртрĕ. Çапла çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнин результачĕсемпе вăл районти пуçламăш шкулсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Столовăй, çутçанталăк кĕтесĕ, театр тата сăнарлă искусство студийĕсем, тăван тавралăха тĕпчекен музей, çулпа çӳрессин хăрушсăрлăх правилисен пӳлĕмĕ-пурне те ăста та илемлĕ йĕркеленĕ.

- Ытти кабинетсем уçма та шухăш пур, анчах та çак ĕçе пурнăçлама шкулта вырăн сахалли кансĕрлет, - тет Римма Гареевна. Кунта çак микрорайонти ачасем кăна мар, “афган”, Кăрмăш, Чишма, Ахмет поселокĕсенчисем те вĕренеççĕ вĕт. Ача нумай пулнипе çывăхра пурăнакансене урăх ача сачĕсемпе шкулсене çӳреме тивет. Кăçал шкула тата икĕ специалист килнĕ - тутар, çаплах акăлчан чĕлхисене вĕрентекен тата физкультура учителĕ. Çак вĕренӳ çулĕнче икĕ класра - акăлчан чĕлхипе, тата иккĕшĕнче музыкăна таrăннăн вĕрентме шутлаççĕ. Виçĕ класри ачасем тутарла вĕренĕç, пĕрремĕш классенчен пĕринче вара - класс тулашĕнчи мероприятисем, калаçу тăван чĕлхепе иртĕç.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

## Мариналланă помидор

3 литр банкине помидорсем тултармалла, унтан тăрăхла 4-6 пая каснă тутлă пăрăç хумалла. Урăх нимĕнле приправа та хушмалла мар. Вĕрекен шыв ярса 15-20 минут хушши шывĕ сивĕниччен хупăлчине çиелтен хурса тытмалла. Унтан шыва кастрюле пушатса ун çине (3 литр банка виçипе шутласа) 150 грамм сахăр песукĕ, 60 грамм тăвар (2 апат кашăкĕ) ямалла. Ирĕлчĕке вĕреме кĕртмелле, унтан помидор банки çине ямалла. Стерилизацилемесĕрех



хупăлчине хупса лартмалла. Çиелтен хулăн ал шăллипе витсе банкăсем сивĕниччченех тытмалла.

## Сар хĕвел тăвăлĕнче

Сар хĕвел тăвăлĕ чир саракан вибрионсене аталанма пулăшнисĕр пуçне генисемпе ухмаха ернисене те “хавхалантарать”. Вăл мĕнпур çынна витĕм кӳрет. Çыннăн пултарулăхри хавхаланăвĕ ӳсет, ăна ăссăр шухăшсем пырса кĕме пултараççĕ. Çак вăхăтра нумайăшĕ хăйне япăх туять. Çак чăрмавсене мĕнле çĕнтермелле-ха?

Пуç мими хĕвел радиацине питĕ сисĕмлĕ. Темĕнле пулсан та организма çут çанталăк условийĕсене хăнăхма вăхăт кирлĕ. Нимĕнле эмел те çынна çутçанталăк улшăнăвĕ витĕм кӳнинчен хăтараймасть. Хăш-пĕр кăсăк мар правилăсене пăхăнса хăвăра япăх туйнине çăмăллатма пулать.

Пирĕн çӳçсем геомагнит сигналĕсене йышăнакан хăйне евĕр антеннăсем пекех. Геомагнитлă кунсенче пуçа пир тутăр çыхмалла. Час-часах мигреньпе аптракан çынсен ку йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Вĕсем тĕрĕс тăваççĕ. Искусствăллă тиртен тумтир ан тăхăнăр. Вăл биологипе статика электричествине хăй çине лайăх пуçтарать те сирĕлме май памасть. Куççем электромагнит хумĕсемшĕн алăксем пулса тăраççĕ. Вĕсене хура куçлăх тăхăнса сыхламалла. Пуринчен те лайăхрах мел вăл - тулли уйăх чухне хĕвел çинче тăвăл татах вăйланнă вăхăтра - вырăн çинче нумайрах выртни.

Электоромагнит хумĕсен витĕмне пула пуç мими оранизм ĕç-хĕлне йĕркелессине вăйсăрлатать. Хырăмлăхпа пыршăлăхра апат-çимĕçе ирĕлтерекен ферментсем кăларасси япăхланать. Апат-çимĕçе ирĕлтерме лайăх пулăшакан пахча çимĕçпе йӳçĕ улма-çырла сĕткенĕсене, минерал шывне, чей кăмпин сĕткенне ĕçни усăллă. Вĕсене хăнăхнă диетăна улăштарса апатчен ĕçмелле. Организм магнит тăвăлĕсене хăнăхтăр тесен рациона тинĕс çимĕçĕсем, сĕт, типĕтнĕ улма-çырларан, уйрăмах курагапа иçĕмрен вĕретнĕ компотсем кĕртмелле. Пăрçа йышши культурăсенчен - пăрçаран, ясмăкран, нимĕç пăрçинчен хатĕрленĕ блюдăсем уйрăмах усăллă. Сойăран хатĕрленĕ канфетсем шоколадлисенчен усăллăрах. Çĕр улмине хуппипе пĕçермелле. Çакăн пек пĕçернĕ çĕр улмире кали нумай. Грек мăйăрĕпе пыл та питĕ усăллă. Янтарь эрешсем çакса çӳрени лайăх. Çак хаклă чулра янтарь кислоти пур, вăл электромагнит тăвăлне сирĕнтен сирсе яма пулăшать. Хыр-чăрăш вăрманĕнче час-часах уçăлса çӳрени магнит тăвăлĕсен витĕмне чакарать.

## Редакци почтинчен

### ПИТĔ ЛАЙĂХ СУТУÇĂСЕМ

Минзифа Абдрахмановапа Зульфа Салахова суту-илӳре тахçантанпах вăй хураççĕ ĕнтĕ. Вĕсем пĕртăвансем. Кăчăканлăра пурăнакансем вĕсен ĕçĕпе кăмăллă. Магазинта яланах таса та тирпейлĕ. Укçа кăна пултăр, халăха кирлĕ тавар пурте пур. Ан тив, пирĕн сутуçăсем малашне те çапла тӳрĕ кăмăллă та таравратлă пулччăр.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кăчăканлă ялĕ.**

### ĔÇНЕ КУРА ХИСЕПĔ

Мария Михайловна Мельникова 16 çул хушши ĕнтĕ Чулпанти çыхăну уйрăмĕнче почтальон пулса вăй хурать. Вăл амăшĕн çулĕпе кайнă - Александра Викторовна хăйĕн пурнăçĕн чылай çулне çак ĕçе халалланă. Мария хăйĕн тивĕçĕсене яваплăх туйса пурнăçлать, хăть мĕнле çанталăк пулнине пăхмасăр, ял çыннисем патне хаçат-журнал вăхăтлă çитерме тăрăшать. Вăл чирлесен вара унăн ĕçĕ питĕ кирлĕ пулнине пурте ăнланчĕç. Кайран ăна каллех ял урамĕсемпе хулпуççи çине пысăк сумкă çакса çӳренине курсан пурте савăнчĕç. Ял çыннисем хамăрăн почтальона тӳрĕ кăмăллă та таравват пулнăшăн тав тăваççĕ.

**Л.ЕГОРОВА,**
**В.СТЕПАНОВА.**

### Телефон айăплă

*- Хăлхусене мĕнле çав таранах пĕçертсе ятăн вара?*

*- Ара, кĕпе якататтăм, çав вăхăтра телефон шăнкăртатса кайрĕ те васканипе хăлха патне телефон трубки вырăнне утюг тытрăм вĕт.*

*- Тепĕр хăлхуна тата мĕнле пĕçертрĕн?*

*-Телефонпа шăнкăравласа тухтăра киле чĕнес тенĕччĕ те ...*

### “Мĕн тумалла?”

*- Тухтăр, эсир пациентăн литературăри туртăмĕ тăрăх диагноз лартатăр тени тĕрĕсех-и?*

*- Çапла, тĕрĕс. Сирĕн юратнă писатель кам?*

*- Чернышевский.*

*- Унăн хăш произведенине кăмăллатăр?*

*- “Мĕн тумалла” ятлине.*

*- Апла... Калăр-ха, эсир хăçантанпа импотент?*

**Уяв юррисем**

### Улăхса тăтăм ту çине

Тухрăм аслă урама,
Сиксе лартăм ут çине.
Улăхса тăтăм ту çине,
Çаврăнса пăхрăм ял çине:

Ялти ватсем хупахра,
Çийĕнчи тумтирĕ саклатра,
Çамрăк-кĕрĕм уявра,
Симĕс-кăвак çийĕнче.

Ту аякки, ай, сĕвек,
Ут кустарма çав лайăх.
Вылямa-кулма мĕн лайăх?
Вун çичĕ çулхи хĕр лайăх.

Шурта шапа кăшкăрать,
Шыв типессе сиснĕ пуль.
Ялта йытăсем вĕреççĕ,
Хĕр каясса сиснĕ пуль.

Урамăра мĕншĕн шăлмастăр,
Ешĕл курăк шăтас тет.
Хĕрĕре мĕншĕн чармастăр,
Хĕрĕр тухса каяс тет.

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**

### Çĕнĕ магазин

*Çĕнĕ “Идел” магазин хамăр тата ют çĕршыв авторĕсен тĕрлĕ жанрлă художество литературине, учебниксем, вĕренӳре пулăшакан пособисем, канцеляри таварĕсен анлă ассортиментне, хамăр çĕршывра туса кăларнă кĕпе-йĕм çумалли хатĕрсем сĕнет.*

*Çаплах кунта 1996 çула валли мусульмансен календарьне те туянма пулать.*

*Çаксене пурне те яланхи пекех “Идел” магазинта йӳнĕ хакпа сĕнеççĕ.*

*Магазин курттăммăн тавар илекен предприятисемпе организацисене пĕрле ĕçлеме сĕнет.*

*Магазин Карл Маркс урамĕнче, халăх сучĕн çуртĕпе юнашар вырнаçнă.*

*Вăл тавар туянакансене кĕтет.*

## Пĕлтерӳсем

### Сутатпăр:

1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-21213. Телефон: 5-33-61.

* * *

“Муравей” мотороллер, сауна валли кăмака. Адрес: К.Маркс урамĕ, 6-52, телефон: 65-7-34.

* * *

Туй кĕпи. Телефон: 5-43-65.

* * *

1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 (хаклă мар), Киклĕ ялĕнчи çурт (дача валли). Телефон: 5-22-39, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнчи дача участокĕ. Телефон: 2-24-87.

* * *

Ĕне. Ерепъел ялĕнчи Вера Ларкинаран ыйтса пĕлмелле.

* * *

Чугун çул садикĕ патĕнчи мĕнпур енчен хăтлă 6 хваттерлĕ пĕр хутлă çуртри 2 пӳлĕмлĕ хваттер.

* * *

Тасатакан сооруженисем патĕнчи нӳхреплĕ гараж. Телефон: 5-16-55.

* * *

Гараж: Телефон: 5-26-02.

### Тара паратпăр:

Кăрмăшри 1 пӳлĕмлĕ хваттер. Çулталăкшăн тӳлемелле. Телефон: 5-16-74, 18 сехетрен тытăнса 21 сехетчен шăнкăравламалла.

### Тĕрли:

Гараж тара илетĕп. Телефон: 2-13-54.

* * *

Апат-çимĕç пасарĕн территорийĕнче атă-пушмак юсаççĕ. Васкавлă! Паха! Йӳнĕ!

Лицензи номерĕ В-98 022039.


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. № 3550.